Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

70 (8136) № * Шăмат кун, 2013 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 21-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Черетсĕр лару

Сентябрĕн 18-мĕшĕнче депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 28-мĕш ларăвĕ ĕçленĕ.

Депутатсем трансфертсем уйăрмалли шутлав методикине çирĕплетнĕ, бюджета шайлаштарма паракан дотацие уйрăм çынсен тупăшĕнчен тытакан налукăн пайĕпе улăштарма йышăннă. Район администрацийĕ çумĕнчи администрацивлă комисси йышне çирĕплетнĕ.

## Пурин те кар тăмалла

Сиенлĕ йăласем – наркотик, эрех – паянхи вăхăтшăн чăн тăшман пулса тăчĕç, вĕсен витĕмĕпе тĕрлĕ преступлени пулать. Ку тĕлĕшри йĕркесĕрлĕхпе кĕрешес енĕпе района ятарлă комиссисем йĕркеленĕ. Ĕнер, сентябрĕн 20-мĕшĕнче, вĕсен черетлĕ ларăвĕ иртрĕ, ăна район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата выранти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Лилия Тарасова ертсе пычĕ. Кун йĕркинче виçĕ ыйту пулчĕ.

**(Тĕплĕнрех хаçатăн çитес номерĕнче вулăр).**

Коллеги ларăвĕнчен

## Ĕçсĕрлĕхе пĕрле чакармалла



*Кĕçнерни кун Чăваш Республикин халăха ĕçпе тивĕçтерекен Патшалăх службин коллегийĕн черетлĕ ларăвĕ Муркашра иртрĕ. Ларура халăха ĕçпе тивĕçтерес ыйтусене сӳтсе яврĕç.*

*Сăн ӳкерчĕкре Патшалăх службин ертӳçи С. Димитриев «Чечексен тĕнчи» сутулӳ павильон директорĕн çумĕпе О. Яковлевăпа пĕчĕк бизнеса аталантарасси пирки калаçу пуçарчĕ.*

**(Тĕплĕнрех 4-мĕш стр. вулăр).**

Видеоконференци

## Электрон паспортсем пулĕç

Сентябрĕн 19-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей Правительствин çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕллевпе информаци технологийĕсемпе анлăрах усă курассин ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комиссийĕн ларăвне хутшăннă. Ăна видеоконференци мелĕпе Раççей премьер-министрĕ Дмитрий Медведев ирттернĕ.

Ларура патшалăх тата муниципалитет услугисемпе тивĕçтерессине меллĕрех тăвассипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă. Дмитрий Медведев палăртнă тăрăх çакă çынсемшĕн меллĕ, ансат пулмалла, вăхăт перекетлеме май памалла. Хальхи вăхăтра патшалăхăн электрон услугисемпе çынсен 25 процентĕ кăна усă курать. 2018 çул тĕлне вĕсен хисепĕ 70 процентпа танлашмалла.

Чăваш Республикинче çак вăхăта патшалăх тата муниципалитет услугисемпе нумай функциллĕ 25 центра «81 чӳрече» мелĕпе тивĕçтерĕççĕ. Султалăк вĕçленнĕ тĕле 26 центрта «116 чӳрече» уçăлмалла. Кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçăнса 119 тĕслĕх библиотекăра «пĕр чӳрече» мелĕпе услугăсемпе тивĕçтерессине йĕркеленĕ.

Ларура çавăн пекех малашне Раççей гражданинĕн паспортне электрон паспортпа улăштарма тытăнасси пирки те сăмах пынă. 2030 çул тĕлне пурте электрон паспортпа усă курма пуçăнмалла.

Электрон паспорта ача çуралсанах парĕç. Унта гражданин пирки пĕтĕм информаци пулĕ. Электрон паспорт çине кусассине тапхăр-тапхăр пурнăça кĕртме палăртаççĕ. 2014 çулта пилот режимĕпе ăна хăш-пĕр регионта пама тытăнаççĕ. РФ Правительствин Председателĕ çĕнĕлĕх пурнăça кĕртессипе хатĕрлекен çĕнĕ законодательствăна пур çĕрте те сӳтсе явассине йĕркелеме хушнă.

Района тирпей-илем кĕртессипе

## Уйăхлăх пуçланать

Тавралăха хӳтĕлемелли çулталăк пынине шута илсе тата хамăр ене тирпей-илем кĕртес тĕллевпе авăн уйăхĕн 23-мĕшĕнче районта йывăç лартассипе уйăхлăх пуçланать. Çак ĕçе хутшăнса пирĕн енре çулленех анлă ĕçсем иртеççĕ.

Черетлĕ кĕр кунĕсем çитнĕ май йывăç лартассипе тата ялсене тирпей-илем кĕртессипе уйăхлăх ирттерме район администрацийĕн пуçлăхĕ йышăну турĕ, ĕçсен планне çирĕплетрĕ. Уйăхлăхра эрозипе кĕрешес ыйту тĕп вырăнта. Çак тĕллевпе районти ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене хăйсен территорийĕсенчи ял хуçалăх предприятийĕсемпе тата организацийĕсемпе калаçса татăлса йывăç лартмалли вырăнсене палăртма тата мĕн чухлĕ лартмаллине пăхса хăварма хушнă. Тĕп тĕллев – эрозипе кĕрешесси.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен асăннă йышăнупа килĕшӳллĕн хăйсен территорийĕсенчи предприяти-организацисен ертӳçисемпе ялсемпе хăйсем вырнаçнă территорисене тирпей-илем кĕртме, санитарипе экологи ыйтăвĕсемпе пĕрле ĕçлемелли пирки калаçнă.

Асăннă ыйтусем паян кашни ял тăрăхĕнчех малти вырăнта пулмалла.

Мĕнех, уйăхлăха активлă хутшăнса йывăçсем ытларах лартар, хамăр тăван ене хăтлăрах тăвар, тирпейлĕхе мала кăларар. Уйăхлăх ĕçĕ район хаçачĕн страницисенче курăнсах тăрĕ.

**А. БЕЛОВ.**

## Çĕр ыйтăвĕ кун йĕркинчех

Канашлуран

Сентябрĕн 18-мĕшĕнче район администрацийĕнче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен канашлăвĕ иртрĕ. Канашлура çĕр пайĕсене хатĕрлесе çитерессипе, нумай ачаллă çемьесене çĕр участокĕсем уйăрса парассипе, хуçасăр пурлăха муниципалитет харпăрлăхне куçарассипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе яврĕç.

Вырăнсенче çĕр пайĕсене харпăрлăха çирĕплетессипе ĕçсем мĕнле пынипе район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн пуçлăхĕ Илья Захаров паллаштарчĕ. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем пĕлтернĕ тăрăх вилнĕ çынсен çĕр пайĕсене харпăрлăха куçарассипе ыйтусем тухса тăраççĕ. Нумай чухне вилнĕ çынсен тăванĕсем е республика тулашĕнче, е пачах урăх çĕр-шывра пурăнаççĕ. Тепĕр чухне кун пеккисен тăванĕсем ăçта пурăннине пĕлекен те çук. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев ĕç-пуç çакăнпа чарăнса лармалла маррине пĕлтерчĕ, тухса тăракан ыйтусене район администрацийĕн структура подразделенийĕсемпе çыхăнса татса пама сĕнчĕ, кирлех пулсан право сыхлавĕн органĕсене те явăçтармалли пирки каларĕ.

Çĕр участокĕсене хатĕрлес тата нумай ачаллă çемьесене вĕсемпе тивĕçтерес ĕç районта малалла пырать. Илья Николаевич ку ĕçсене кашни ял тăрăхĕнче мĕнле йĕркеленине уйрăмшар тишкерсе тухрĕ.

Район администрацийĕн информаципе тивĕçтерекен пайĕн пуçлăхĕ Валерий Лаврентьев хăйĕн сăмахĕнче информаци ресурсĕсемпе ĕçлесси, видеоконференци режимĕпе канашлусем ирттересси, ял тăрăхĕсен автоматизациленĕ информаци системин ĕçĕ-хĕлĕ çинче чарăнчĕ. Кунпа пĕрлех тухса тăракан проблемăсене татса парасси пирки те сӳтсе явăç.

Кунсăр пуçне канашлура 2013 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейри граждансене йышăнмалли куна ирттересси пирки те сăмах пычĕ. Унчченех вара хăш-пĕр ял тăрăхĕсенче компьютер техникине çĕнетессин ыйтăвне çине тăрса татса памалла.

**Т. ЯКОВКИНА,**
**район администрацийĕн информаципе тивĕçтерекен пайĕн пĕрремĕш разрядлă аслă специалисчĕ.**

Вăтă çынсен кунĕ умĕн

## Тӳлевсĕр тата çур хакпа

Октябрĕн 1-мĕшĕнче Вăтă çынсен кунне паллă тăватпăр. Районта туса ирттермелли асăннă кунпа çыхăннă мероприятисен планне çирĕплетнĕ. Çавна май район администрацийĕ кăçалхи сентябрĕн 12-мĕшĕнче 281 № хушу кăларнă. Вăл Вăтă çынсен кунĕ умĕн районти йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен предприятисен ĕçне йĕркелессипе çыхăннă.

Йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен пур харпăрлăх формипе ĕçлекен предприятисенче те сентябрĕн 27–28-мĕшĕсенче Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе инваличĕсенне, вăрçăра вилнĕ салтаксен тăлăх мăшăрĕсенне, тыл ветеранĕсенне тӳлевсĕр майпа çӳç касассине йĕркелеме сĕннĕ. 55 çулхи тата аслăрах хĕрарăмсен, 60 çулхи тата аслăрах арçынсен çав кунсенче çак ĕçе 50 процент тӳлевпе пурнăçлаттарма тивĕç.

Мунча услугипе тивĕçтерекен пур йышши предприятисенче те сентябрĕн 29-мĕшĕнче çăвăнасси Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе инваличĕсемшĕн, вăрçăра вилнĕ салтаксен тăлăх мăшăрĕсемшĕн, тыл ветеранĕсемшĕн тӳлевсĕр пулмалла. 55 çулхи тата аслăрах хĕрарăмсен, 60 çулхи тата аслăрах арçынсен çав кун мунчара çăвăннăшăн услуга хакĕн 50 процентне кăна тӳлемелле пулать.

## «Эсĕ пĕччен мар!»

Акци

Кашни çыннах юратупа тимлĕх кирлĕ. Пĕччен, тăвансемсĕр тата çывăх çынсемсĕр юлнисене вара – пушшех те. Вăтă çынсен пĕтĕм тĕнчери кунне паллă тунă май Раççей Почти Пĕтĕм Раççейри «Эсĕ пĕччен мар!» акци ирттерет.

«Вăтă çынсем тĕлĕшпе тимлĕ пулни обществăн ăс-хакăл шайне кăтартса парать, – палăртать Федераци Почта çыхăнăвĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн директорĕ Владимир Тимофеев. – Хамăр акцие йĕркеленипе эпир республикăра пурăнакансене пĕччен пурăнакан вăтă çынсем çине тимлĕх уйăрмалли пирки аса илтересшĕн. Почта çыхăнăвĕн ĕçченĕсем пĕчченлĕх тĕслĕхĕсемпе куллен тĕл пулаççĕ. Вĕсем никамран та лайăхрах пĕлеççĕ: ырă сĕнӳсем сунса çырнă ансат открытка та вăтă çынна телей парнелеме пултарать, уншăн пĕчĕк уяв пулса тăрать, ăна куллenхи пĕрпеклĕхрен хăпма пулăшать. Эпир çавăн пирки шухăшлатпăр та – хăйĕн патне никам та çыру çӳретмен çын тĕлĕшпе тимлĕх уйăрар».

Сентябрĕн 28-мĕшĕччен Раççей Почтин клиенчĕсем почта çыхăнăвĕн кирек хăш уйрăмне пырса операторпа çыхăнса вăл пурăнакан учреждени адресĕпе çыру, открытка е посылка ярса пама, кунтах парне туянса пама е хаçат-журнал çырăнса пама пултараççĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕнче вара почтовиксем сирĕн парнесемпе ырă сĕнӳсене социаллă пулăшу учрежденийĕсенче пурăнакан вăтă çынсене çитерсе парĕç.

Федераци Почта çыхăнăвĕн управленийĕн ĕçченĕсем хăйсем те çырусемпе посылкăсем ярса паракансем пулса тăраççĕ. Сăмахран, республика филиалĕн сотрудникĕсем вăтă çынсен социаллă пулăшу учрежденийĕсене вĕсем ытларах ыйтакан изданисене çырăнса пама шутлаççĕ.

Пĕччен вăтă çынсен чĕрисене çуркуннепе ăшăлăх пайăрки парнелесси, пурнăçри кĕркуннине пурăнса ирттерме пулăшасси пĕтĕмпех сирĕнтен килет!

# Тĕл пулусем ĕçлĕ иртрĕç

**Пĕрлехи информаци кунĕнчен**

**Районта сентябрĕн 18-мĕшĕнче пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Информаци кунĕн темисем – республикăра патшалăх социаллă политикине пурнăçа кĕртессипе пурнăçламалли мерăсем, ĕç тăвакан влаç органĕсем çул çинчи хăрушсăрлăха ÿстерессипе тата травматизма чакарассипе йышăнакан мерăсем, тавралăха тирпей-илем кĕртессипе экологи субботникĕсем ирттересси çинчен.**

**Çав кун района Чăваш Республикин вĕренÿ тата çамрăксен политикин министрĕн çумĕ Надежда Дмитриева, Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствин экономика хăрушсăрлăхĕн тата коррупцие хирĕç кĕрешессин управленийĕн пуçлăхĕ Марат Обитов, Чăваш Республикин конкурентлă политикăпа тарифсен патшалăх службин ертÿçин çумĕ Алина Елисеева килчĕç. Ушкăн членĕсем район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсемпе пĕрле Муркаш, Чуманкасси, Çатракасси, Мăн Сĕнтĕр, Юнкă, Уйкас Янасал, Турай ял тăрăхĕсенче пулса ĕç коллективĕсемпе тĕл пулусем йĕркелерĕç, çынсен ыйтăвĕсене хуравларĕç.**

## Патшалăх пулăшăвĕ курăмлă

ЧР вĕренÿ тата çамрăксен политикин министрĕн çумĕ Надежда Дмитриева, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, район администрацийĕн вĕренÿ тата çамрăксен политикин пайĕн информаципе методика центрĕн заведующийĕ Ирина Ершова Çатракассинчи тата Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулсене çитсе курчĕç.

Çатракасси шкулĕн директорĕ Валерий Прокопьев шкул ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ. Шкулта юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ: шыв пăрăхĕсене улăштарнă, алăксене çĕнĕрен лартнă. Кунпа пĕрлех ачасене апатлантарассине тивĕçлипе йĕркеленĕ темелле. Шкул столовăйĕ валли хальхи оборудовани кÿрсе килнĕ, сĕтел-пукан туяннă, апат çимĕç хатĕрлемелли блока тĕпрен юсанă.

Шкулти педагогсен коллективĕпе тĕл пулнă май Надежда Викторовна Чăваш Республикин патшалăх социаллă политикин мероприятийĕсем мĕнле пурнăçа кĕрсе пыни, çулсем çинче ачасемпе пулса иртекен инкексене чакарассипе республика влаç органĕсем туса ирттерекен ĕçсем, территорисене тирпей-илем кĕртессипе йĕркелекен экологи субботникĕсем, кĕрхи кунсенче йывăçсем лартса хăварасси, ялсемпе çул хĕррисене тата масарсене тирпейлесси пирки тĕплĕ чарăнса тăчĕ.

Хыççăн информаци ушкăнĕ «Елочка» ача садĕнче юсав ĕçĕсем мĕнле пынипе паллашрĕ.

Информаци ушкăнĕ Мăн Сĕнтĕр шкулне те çитсе курчĕ. Шкулта 344 вĕренекен пĕлÿ илет. Асăннă шкулта та столовăй валли кирлĕ оборудовани, сĕтел-пукан туяннă, апат хатĕрлемелли блокра юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ. Шкулта электропроводкăна, водопровод системине пĕтĕмпех улăштарнă.

Шкул коллективĕпе тĕл пулнă май Надежда Викторовна социаллă политика шайĕнче туса ирттерекен ĕçсем çинче чарăнчĕ, ĕç укçи тÿлессин системинчи улшăнусем пирки сăмах хускатрĕ.

Шкул ачисем çул çинче инкексене ытларах лекни йĕркеллĕ пулăм мар. Надежда Викторовна ку енĕпе профилактика ĕçне шкул çулĕсенчен çеç мар, шкул çулне çитиччченех анлăн йĕркелеме кирлине палăртрĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Николаевич та хăйĕн сăмахĕнче ку ыйтуран пăрăнса иртмерĕ. Çул-йĕр çинчи инкек-синкексене асăрхаттарассипе кирлĕ мерăсем йышăннă. Çулсем çинче ятарлă паллăсем тăвассипе, знаксем вырнаçтарассипе ĕçсем пурнăçланă. Ку ĕçсем малалла пыраççĕ. Территорисене тасатассипе, тавралăха тирпей-илем кĕртессипе вара çак ĕçсене пурне те анлăн явăçтарни кирлĕ.

Тĕл пулăва хутшăнакансем кружоксен ĕçне ертсе пыракансене ĕçшĕн тÿлессин, вĕренекенсене учебниксемпе тивĕçтерессин ыйтăвĕсене хускатрĕç. Ку тата ытти ыйтусем çине те вĕсем тулли хуравсем илме пултарчĕç.

**Т. ЯКОВКИНА.**

## Хамăртан килнине хамăрăнах пурнăçламалла

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕн пуçлăхĕ Владимир Никитин тата районти социаллă хÿтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Валентина Аникина малтанах Чуманкасси ял тăрăхĕнче пулчĕç, ял тăрăхĕн активĕпе тата Чуманкасси шкулĕнчи учительсен коллективĕпе тĕл пулусем йĕркелерĕç. Тĕл пулусене Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Белов, Чуманкасси шкул директорĕ Валерий Васильев хутшăнчĕç.

Владимир Германович хăйĕн сăмахĕнче çавна палăртрĕ. Медицина ĕçченĕсен, вĕренÿ, хушма вĕренÿ, шкулчченхи вĕренÿ, культура сферинче вăй хуракансен ĕç укçине ÿстерсе пырассипе палăртнă мероприятисем республика шайĕнче те, вăл шутра районта та йĕркеллех пурнăçланса пыраççĕ. Çулталăк вĕçлениччен вĕрентÿ ĕçченĕсен ĕç укçи шайне регионти вăтам ĕç укçи шайĕпе танлаштарма палăртнă.

Пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкулсен, ача сачĕсен çурчĕсене юсассипе пысăк ĕçсем пурнăçлама май килнĕ. Ку ĕçсене Чуманкасси ял тăрăхĕн территорийĕнче те йĕркеленĕ. Кăçал уйрăмах районти шкулсенчен хăшĕсен столовăйĕсене çĕнĕ оборудованипе тивĕçтерме май килнине ырă енчен палăртмалла. Кунта Чуманкасси, Çатракасси, Калайкасси, Йÿçкасси, Мăн Сĕнтĕр шкулĕсене асăнса хăвармалла. Сăмах май иртнĕ çул Муркаш шкулĕн столовăйне кăна çĕнĕ оборудованипе тивĕçтерме май килнĕ. Хальхи вăхăтра Чуманкасси шкулне уйрăммăн хутса ăшăтассине йĕркелессипе ĕçсем пыраççĕ.

Çул-йĕр çинче ачасем инкеке лекесси ÿссе пыни шухăшлаттарать. Кун пек тĕслĕхсем районта иртнĕ çул 2 пулнă пулсан, кăçал инкексен шучĕ 8-а çитнĕ. Çавăнпа çул çинчи хăрушсăрлăх темипе ачасемпе калаçусем ирттерни, асăрхаттару мероприятийĕсем йĕркелени ытлашши мар.

Кăçалхи çул Тавралăха хÿтĕлемелли çулталăк пулнине манма кирлĕ мар. Тавралăха тирпей-илем кĕртессин, территорисене çÿп-çапран тасатассин ыйтăвĕсене манăçа кăларас марччĕ.

Районти социаллă хÿтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Валентина Аникина социаллă хÿтлĕхе тивĕçлисене районта пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерни пирки каласа пачĕ. Вĕсенчен нихăшĕ те пулăшусăр юлмасть. Федераци, республика шайĕнчи çăмăллăхсемпе тивĕçтересси саккунпа килĕшÿллĕн пулса пырать.

Мăн Сĕнтĕрти, Каршлăхри, Шомикри, Йÿçкассинчи вăрçăпа ĕç ветеранĕсен тата интернат çурчĕсенче пурăнакансене кирлĕ условисене пĕтĕмпех туса панă.

Çемьери йывăр условисенче çитĕнекен ачасене, ватă çынсене сипленме е канма кайма санаторипе легерьсен путевкисемпе тÿлевсĕр тата çăмăллатнă йĕркесемпе тивĕçтерессине пăхса хунă. Кăçал та вăрçăпа ĕç ветеранĕсем 52 çын, шкул ачисем 46-ăн путевкăсене тивĕçнĕ.

Паллă ĕнтĕ, ял çыннисене хумхантаракан, канăç паман ыйтусем çук мар. Чуманкасси ял тăрăхĕнче пурăнакансемпе тĕл пулнă май ял урамĕсенчи çулсене тăвасси пирки сăмах пуçарни пĕрремĕш хут мар. Ку тĕлĕшпе Владимир Германович ăнлантарса пани чăнлăхпа пĕр килет. Район территорийĕнче ялсен шучĕ пĕчĕк мар. Çăмăлах пулман пулин те, республика программипе усă курса иртнĕ çулсенче вĕсене кашнинех асфальт сарнă çулсемпе çыхăнтарма май килнĕ. Ял урамĕсенче пуринче те асфальт сарасси вара пĕр çулта тумалли ĕç мар. Акă район территорийĕнче ялсенчи çулсен тăршшĕ пĕтĕмпе 375 километр пулсан, асфальтлисем 100 километр. Йĕркеллĕ çул çукки 275 километр. Пĕр километр асфальт çул тума хальхи вăхăтра 15 миллион тенкĕне яхăн кирлĕ пулсан, пĕтĕм ялта çул тăвасси мĕн хака кайса ларассине шутласа пăхма йывăр мар. Ăна валли районăн 10 çулхи пĕтĕмĕшле бюджечĕ те çитес çук. Çавăнпа та хальлĕхе ыйтăва вырăнти майсене шута илсе, ял çыннисемпе канашласа, пĕр шухăшлă пулса татса пама тивет. Чуманкасси ялĕнчи, Исетерккĕ патĕнчи çулсем пирки те çавна каламалла.

Хăш-пĕр ялсенче электроэнерги напряженийĕ нормăран пĕчĕкрех пулни пирки пĕлтерчĕç. Çынсене ял урамĕсенче хуçасăр йытăсем йышланса кайни те пăшăрхантарать. Тĕрĕссипе ку йытăсене никам та килсе яман, вĕсем ял çыннисенех. Тĕл пулусене хутшăннисем ыйтусем çине тулли хуравсем илме пултарчĕç. Хăшпĕр ыйтусене ответлисем çывăх вăхăтра татса пама шантарчĕç.

Турайри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вăтам шкулти учительсен коллективĕпе те тĕл пулу иртрĕ. Шкул директорĕ Юрий Герасимов каласа панă тăрăх шкул ачисен вăйĕпе икĕ çул каялла çул хĕррипе 3 километр йывăççем лартса хăварнă. Хунавсем кивĕ пулнă пирки ытларахăшĕ чĕрĕлмен. Çак ĕçе тепĕр хут йĕркелеме палăртаççĕ.

Ыйтусем Турайсен те çук мар. Шкулта халĕ 92 ача вĕренет. Вĕсен йышĕ чакса пынă май вĕрентекенсен шутне те чакарма тивĕ. Пĕр предмет учителĕ тепĕр предметпа та вĕрентме тытăнни вара ачасене паракан пĕлÿ шайне чакарма пултарать. Вĕрентÿ ĕçченĕсем выслугăпа паракан çăмăллăхсене урăх çĕре ĕçлеме куçас пулсан сыхланса юлассин, медосмотр тăнăшăн укçа тÿлеме тивнин ыйтăвĕсене çĕклерĕç. Çÿп-çап ыйтăвĕ кунта та çивĕччисенчен пĕри. Ялсенчи çÿп-çапа, çул хĕррисемпе унта та кунта туса хунă йăла каяшĕн миххисен куписене полигона турттарса каяссине йĕркелемеллех. Плотина хĕрринче тĕрлĕ тасамарлăх хуçаланма тытăннă. Кун пек ыйтусене вара вырăнтах татса пама май пур. Çынсен пуçаруллăрах пулмалла кăна.

Çав кун Турай ял тăрăхĕнчи Çатракасси ялĕнче пурăнакан тыл ĕçченĕ, вăрçă инваличĕн мăшăрĕ Фекла Иванова 95 çул тултарчĕ. Владимир Германовичпа Валентина Алексеевна ăна паллă кун ячĕпе ăшшăн саламларĕç, Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн Тав çырăвне, район администрацийĕ ячĕпе чĕрĕ чечек кăшăлĕ тата парне пачĕç, ырлăх-сывлăх сунчĕç.

Информаци ушкăнĕсем хутшăннипе ытти ĕç коллективĕсенче те тĕл пулусем тивĕçлĕ шайра, усăллă иртрĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

## Çитменлĕхсемпе лăпланса лармалла мар

Чăваш Республикин конкурентлă политикăпа тарифсен патшалăх службин ертÿçин çумĕ Алина Елисеевăпа район администрацийĕн экономика тата агропромышленность комплексĕн аталанăвĕн пайĕн ертÿçи Нина Костина пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн Муркашри муниципаллă предприятийĕнче пулчĕç. Асăннă организаци ертÿçи Сергей Тимофеев кулленхи ĕçхĕлпе паллаштарчĕ, предприятири йывăрлăхсене палăртрĕ.

Тĕрлĕ услуга тарифĕсем пĕчĕкки е вĕсене çирĕплетме май килменни, инфраструктура кивелсе çитни, тăкаксем пысăк пулни кулленхи ĕçре ура хурать. Çитменнине тата Муркашри сĕт-çу завочĕн тытăмĕнчи тасатмалли сооруженини, «Ударник» федераци патшалăх унитарлă предприятийĕн балансĕ çинче пулнă шывпа тивĕçтермелли сооружени коммуналлă хуçалăхшăн хушма тиев тата тăкак шутланать.

Услугăпа тивĕçтерессине тивĕçлĕ шайра пурнăçламалла, анчах çÿлерех асăннă сооруженисене пĕр тытăмран тепĕр тытăма куçарассипе ятарлă тапхăра саккунра пăхса хуманни – паянхи кунри пысăк йывăрлăх. Çакă вара тарифсемпе çыхăннă, мĕн пур шайлашусăрлăх предприяти шăпишĕн пысăк чăрмавлă.

Информаци кунĕнчи пĕрремĕш ыйту республикăра патшалăх социаллă политикине вăя кĕртессипе пурнăçламалли мерăсем тавра пулчĕ. Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин Правительствисен тĕп ĕç-хĕлĕ çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатассипе çыхăннă. Çавна май чылай указ вăя кĕрсе пырать, вăл шутра ĕç укçи, тĕрлĕ пособи тÿлесси тата ытти те. Раççей Федерацийĕн Президенчĕн указне пурнăçланă май Чăваш Республикинчи бюджет сферинче тăрăшакансен хăш-пĕр категорийĕсене ĕç укçи ÿстерсе тÿлеме 2013 çулта 1920,6 миллион тенкĕ кирлĕ, вăл шутра федераци бюджетĕнчен 379,9 миллион тенкĕ. Çакăн пирки республика представителĕ Алина Елисеева пĕлтерчĕ.

Сывлăх сыхлав учрежденийĕсен тĕп енĕсенчен пĕри – профилактика ĕçĕ. Çавна май республикăра хăш-пĕр категорие диспансеризацилес тапхăр пырать, çакна йăлтах çынсен сывлăхĕшĕн йĕркеленĕ. Анчах та ку ĕç тивĕçлĕ шайрах пурнăçланаймасть-ха, малти вырăнта – ăнланманлăх. Диспансеризацин ку таранччченхи ĕçне пĕтĕмлетнĕ май çакă курăнать: республикăра шала кайнă 664 чире пĕрремĕш хут тупса палăртнă. Апла пулсан ăна вăхăтра ирттерни чи малтан хамăршăн пĕлтерĕшлĕ. Ку енĕпе вара çÿлерех асăннă предприятире йăлтах йĕркеллĕ, çакăнта вăй хуракансем санитари нормипе килĕшÿллĕн çулталăкра пĕр хутчен медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухаççĕ.

Чăваш Республикинчи конкурентлă политикăпа тарифсен патшалăх службин ертÿçин çумĕ Алина Елисеевăпа район администрацийĕн экономика тата агропромышленность комплексĕн аталанăвĕн пайĕн ертÿçи Нина Костина «Моргаушавтотехсервис» уçă акционерлă обществăра пулчĕç. Кунта малтанхи çулсенче 500 çын таран ĕçленĕ, халĕ пачах урăх сăн-сăпат. Шел, асăннă организаци ертÿçипе калаçма май килмерĕ ку чухне. Апла пулин те ыттисемшĕн тĕрлĕ информаци вырăнлă пулчĕ. Кунта пухăннисене çурт-йĕр условийĕсене йĕркелеме май паракан программăсем кăсăклантарчĕç. Çавăн пекех патшалăх тата муниципалитет услугисемпе тивĕçтерекен нумай функциллĕ центр ĕçĕ-хĕлĕ те хăш-пĕр çынсемшĕн хальлĕхе – çĕнĕлĕх. Социаллă программăсемпе, экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕпе Нина Марксовна паллаштарчĕ.

Республикăра çулсеренех сентябрь – октябрь уйăхĕсенче тирпей-илем кĕртес уйăхлăх ирттереççĕ. Халĕ асăннă ĕçĕн хĕрÿ тапхăрĕ пырать. Апла пулсан кашнинех уйăхлăха хутшăнма тăрăшмалла: тавралăха хăтлăх кĕртмелле, йывăç-тĕм лартмалла.

Кун йĕркинчи черетлĕ ыйту çул çинчи хăрушсăрлăха ÿстерессипе тата травматизма чакарассипе çыхăннă ĕç-хĕл тавра пулчĕ. Шел пулин те, аварисен шучĕ чакса пымасть. Кăçалхи сакăр уйăхра республикăри çул-йĕр çинчи 1248 факта регистрациленĕ, вĕсенче 148 çын пурнăçĕ татăлнă, 1607-шĕ аманнă.

Районта 41 авари пулнă, 12-ĕн вилнĕ, 72-ĕн аманнă. Çаксене шута илсе шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем тĕллевлĕ тĕрлĕ рейд, калаçу, тĕрĕслев ирттереççĕ. Ку мероприятисене йĕркелени усăллă пуласса шанас килет.

Çак ыйтусем тавра иртрĕ информаци кунĕ шайĕнчи калаçу.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

## Саламлатпăр



Кашмаш ялĕнче пурăнакан, пĕр выранта нумай çул ĕçлекен **Алевтина Ивановна АЛЕКСАНДРОВА** сентябрĕн 21-мĕшĕнче тивĕçлĕ канăва тухать. Çав ятпа эпир ăна ăшшăн саламлатпăр.

Хисеплĕ кинĕм Аля, тăхлачă, сывлăхăр çирĕп пултăр, утас çулу телейлĕ, пурнас кун-çулу вăрăм килтĕр. Яланах мăшăрупа, ачусемпе, мăнуксемпе, тăхлачă-хăтасемпе, тăвансемпе савăнса пурăнмалла пултăр. Телей хĕвелĕ те саншăн яланах çунса тăтăр. Пăрчăкан пек ĕçчен, ăш пиллĕ эсĕ, пирĕн Аля!

**Пысăк салампа Муркашра пурăнакан Любимовсен тата Захаровсен çемйисем.**



Пирĕн юратнă та хаклă çыннăмăра – Йӳçкасси ял тăрăхне кĕрекен Вăрманкасси ялĕнче пурăнакан **Валериан Михайлович АЛЕКСЕЕВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăй-хал, телей сунатпăр. Турри вăй-хал парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр.

**Саламласа: мăшăрĕ, ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă, юратнă мăшăра, аттене, асаттене, ырă кăмăллă тăвана – Çармăçкасси ялĕнче пурăнакан **Виталий Ильич ХЛЕБКОВА** 75 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн, пирĕн ыратусене хăвăн витĕр кăларнăшăн. Сывлăху санăн çирĕп пултăр, вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр. Пире, висĕ ачине, ура çине тăратнăшăн, ылтăн аллусемшĕн тав сăмахĕ калатпăр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, нумай-нумай пурăнма сунатпăр. Нихçан та ан чирле, эсĕ пурри пирĕншĕн питĕ пысăк телей, савăнăç. Çак кунсенче Маша хĕрĕн, Женя мăнукĕн, Карина кĕçĕн мăнукĕн çуралнă кунĕсем, вĕсене те çирĕп сывлăх сунатпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, висĕ хĕрĕ, висĕ кĕрӳшĕ, тăватă мăнукĕ, кинĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, тăванĕсем.**



Пирĕн юратнă та хаклă, сывăх юлташа – **Елена Варсонофьевна ИЛЬИНАНА**, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи ырми-канми почта ĕçченне, 50 çулхи юбилейпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, утас çулу яланах такăр пултăр, ĕмĕрӳ вăрăм килтĕр. Юрату, килĕшӳ пĕр-пĕрне ăнланса пурăнма, ĕмĕт-шухăшсене пурнăçа кĕртсе пыма вăй-хал паччăр. Çумра яланах шанчăклă çынсем, умра – çутă та ырă кунсем пулччăр.

**Саламлаканĕсем: тус-юлташĕсем.**



Чи хаклă çыннăмăра, аннене – Ятман ялĕнче пурăнакан **Раиса Яковлевна ФЕДОРОВĂНА** 90 çул тултарнă ятпа чунчĕререн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Турри сана чир-чĕртен упратăр, вăй-хал парса тăтăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем.**

Хаклăран та хаклă, чунтан юратнă мăшăра, аннене – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Алевтина Ивановна АЛЕКСАНДРОВĂНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.



Аннеçĕм, мĕн тери пысăк парăмра эпир сан умăнта. Эсĕ пирĕн хĕвел ăшши, пурнăç тĕрекĕ, чун илемĕ. Нумай çул пурăн пире савăнтарса, хăвна упра, чунчĕрӳпе яланах çамрăк пул.
Тавах сана, аннемĕр, эсĕ пурришĕн,
Кил чысĕпе çемье ăшши пулнишĕн,
Татах та эс нумай çул пурăнсам,
Пире пит лайăх эс çумра пулсан.

**Ăшă салампа: мăшăрĕ, ачисем, кĕрӳшĕ, кинĕсем, мăнукĕсем.**



Ятман ялĕнче пурăнакан хамăрăн тăвана, юратнă кинемее – **Раиса Яковлевна ФЕДОРОВĂНА** 90 çул тултарнă ятпа чунчĕререн тухакан чи çепĕç те ырă сăмахсемпе саламлатпăр. Малашне те сывлăху ан иксĕлтĕр, тараватă кăмăлу ăшă туйăма ан çухаттăр, çемьере килĕшӳпе çураçулăх канлĕ ватлăха упраччăр, пурнăç урапи çулĕ 90 çула çитсе тесе ан чăхăмлатăр.

**Салампа Çатракассинчи Кольăпа Светлана, Лидăпа Виталий, Анютăпа Никодим Федоровсем тата вĕсен çемйисем.**



Юратнă йăмăк, хресна анне, хĕрĕм, аппа – Эхветкасси ялĕнче пурăнакан **Галина Семеновна ПУДОВА** çак кунсенче 55 çул тултарать. Юбилей ячĕпе ăна пур хурăнташ-тăванĕсем чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей сунатпăр. Турри сана малашне те вăй-хал парса тăтăр. Пур инкек-синкек, чир-чĕр санран пăрăнса иртсе кайччăр. Ывăлу-кинӳсене, мăнукусене нумай-нумай çул савăнтарса пурăн.

**Ăшă салампа: аппăшĕпе йыснăшĕ, Грачевсен, Калининсен, Квасовсен çемйисем.**

# Аннен чунне савăнтарар

## Шăпа



...Татас марччĕ шурă çĕмĕртне,
Упрама пĕлесчĕ чечекне.
Ĕмĕр пĕрле пурăннă чухне,
Упрама пĕлесчĕ аннене...
**О. Семенов.**

Оринин ял тăрăхĕнчи Патаккасси ялĕнче тĕлĕнмелле пултаруллă та тараватă кинемей пурăнать. Ăна пурте хисеплесçĕ, Софья аппа тесе чĕнеççĕ. Çак кунсенче вара пирĕн сумлă та сăпайлă çыннăмăр 98 çула ура пусрĕ. Чăн-чăн истори çынни, аваллăх тĕнчи тесе калама пулать ун пирки.

Софья Сергеевна Ситуккассинче 1916 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче çуралнă. Çапах та унăн кун-çулĕ маншăн питĕ кăсăклă пулчĕ. Çак тапхărта вăл мĕн кăна илтмен-пĕлмен пулĕ.

Паллă ĕнтĕ, вăл ӳсĕмрисен кунçулĕ питĕ нушаллă пулнă. Çуралсанах ăна Граждан вăрçи кĕтнĕ, ун хыççăн вара – Аслă Отечественнăй вăрçă. Пулнă-ши вăл ачалăх тени Софья Сергеевнăн? Ку вара иккĕленӳллĕ. Çапах та вăл йывăрлăха парăнман. Вăй-хăватне ăçтан çитернĕ-ши?

– Мĕн пĕчĕкрен алăран ĕç кайман çав. Арçын ĕçне те, хĕрарăм ĕçне те тиркемен. Çимелли çукчĕ, хырăмĕ вара выçатчĕ. Пачах нимĕн те çимен кунсене, тăхăнмалли çук вăхăтсене аса илсен халĕ те куçăм шывланать. Выçăпа, шăнса кӳтнипе вара ал-урасем те чĕтреççĕччĕ, йĕпе-сапине те пăхман çав, – аса илет Софья Сергеевна иртнĕ çулсене.

Çапла вара çул хыççăн çул иртнĕ, Софья ӳссе çитсе хĕр пулнă. Нимĕнле ĕçе те тиркемен вăл, вăрвар та тараватскере Патаккасси яшĕ Иван Соловьев асăрханă та питĕ килĕштернĕ, куçран вĕçертмен. Хĕрпе каччă 1940 çулта çемье çавăрнă, пĕр-пĕрне ăнланса пурăнма сăмах панă. Тепĕр çултан вара çут тĕнчене Владислав килнĕ, çамрăк мăшăрăн пысăк савăнăç пулнă, анчах та нумайлăха мар.

Хăрушă вăрçă пуçланнă, кашни киле хуйхă-нуша илсе çитернĕ. Ку тапхăрта Софья Сергеевна та алла ача тытса ларма пултарайман. Вăл ыттисемпе пĕрле Çĕмĕрле вăрманĕнчен йывăç турттарнă çĕре хутшăннă. Питех те йывăр пулнă çав вăхăтри хĕрарăмсене. Мăшăрĕсем хаяр тăшманпа çапăçнă вăхăтра пĕтĕм йывăр ĕç вĕсен хул пуççийĕ çине тиеннĕ.

Кăмăл-сипетне, сăпайлăхпа этемлĕхне сухатман Софья кинемей нуша вăхăтĕнче. Вăрçăран таврăннă мăшăрĕпе пурнăçа малалла тăснă, хĕрпе ывăл çуратса ӳстернĕ. Шел пулин те, Герман ывăлĕн кунçулĕ вăхăтсăр таталнă çав. Унăн тăватă ывăлне пăхса ӳстерме вăл хăйĕн юратнă кинне, Альбинăна, сахал мар пулăшнă.

Яланах çутă сăн-сăпатлă кинемей пуриншĕн те тĕслĕх пулса тăрать. Хальхи вăхăтра хăш-пĕр çамрăк хĕрарăм та Софья кинемей пек тирпейлĕ мар. Сумлă çулхи Софья кинемей ăс-тăнĕ тĕрĕс-тĕкел, çаврăнăçулăхĕ те пĕтмен. Хушма хуçалăхри пур ĕçе те хăй аллипе пурнăçлама тăрăшать. Кинне сăмăлрах пултăр тесе шутлать ĕнтĕ. «Апатне те кинсĕр çиейместĕп», – тет Софья кинемей йăл кулса. Çуралнă кунĕ ячĕпе Софья Сергеевнăна пĕтĕм ял-йыш ячĕпе саламлатпăр, çирĕп сывлăх тата вăрăм кун-çул сунатпăр. Унăн çутă та илемлĕ сăн-сăпачĕ малалла та ял-йыш кăмăлне çутатса та ăшăтса çеç тăтăр. Пирĕн çак кинемейрен пурнăç сĕткенне илме вĕренесчĕ.

**Светлана ВЯЗОВА,**
**депутатсен Оринин ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутачĕ.**

# Çĕр-аннемĕре тивĕçлипе хакламастпăр

### ЧĂВАШ УЙĔСЕНЧЕ ÇЫН ÇӲЛЛĔШ ТĔМСЕМ ТЕ ЕШЕРЕÇÇĔ

Чăваш тăрăхĕ пыл хурчĕсен вĕлли тейĕн. Пысăках мар территорие пурнăç хăй йĕркипе пырать. Ĕçчен те маттур йыш ваттисен йăлипе тыр-пул акать, çĕр улми лартать, пахча çимĕç ӳстерет... Анчах çĕр-аннемĕре тивĕçлипе хакламастпăр. Çур çулта кăна Раççей ял хуçалăх надзорĕн республикăри управленийĕн инспекторĕсем çĕре упрассинчи явапсăрлăхшăн 76 хутчен административлă йĕркепе айăпланă. Çав шутра – 11 юрлицона, должноçри 18 çынна, 44 пайçăна, 3 усламçăна.

### ЯЛ ХУÇАЛĂХ ПĔЛТЕРĔШЛĔ ÇĔРСЕМ ТИМЛĔХ ЫЙТАÇÇĔ

Тĕлĕнмелле вăл çут çанталăк. Акă ансат пĕр тĕслĕх кăна. Тăпрана пĕр витре çĕр улми пăрахатăн, кĕркунне вара çак çимĕçе 10–15 витре таранах пуçтарса илетĕн. Çакă пирĕншĕн хăнăхнă пулăм. Çавăнпа тăпрана кирлĕ пек хакламастпăр та пулас. Чăннипе çĕртен илекен пархатар пирки калаçа пĕтерме çук. Анчах пур япала та кивелет. Пăхса тăман хуçалăх ишĕлет. Çĕр те хăйне хăй аталанаймасть.

"Çакă çутă тĕнчере вăйли çук та этемрен", – тесе ахальтен каламан ĕнтĕ. Хресчен пулăшăвĕсĕр çĕр пахалăхĕ лайăхланаймĕ, унăн пулăхлăхĕ сыхланаймĕ. Çак самантсем хăш-пĕр хуçана хумхантармаççĕ те тейĕн. Асăннă ведомство ĕçченĕсем тăпран çиелти сийне ирĕк илмесĕр хырса илнĕ (2 гектар), çĕре пăснă (2,6 гектар), япăхланнă çĕрсене вăхăтра рекультиваци туман (1,5 гектар), агрохими тĕпчевĕсем ирттермен (2393 гектар) тĕслĕхсем тупса палăртнă. Пуринчен ытла вара хытă каяшсемпе варалана тата пусă çаврăнăшне кĕртмен лаптăксем шухăшлаттараççĕ. Асăннă тапхăрта сӳп-çап сапаланса выртакан 12 вырăна (6,5 гектар) шута илнĕ. Ăпăр-тапăр мар тăк, çум курăк илме кĕрекен 56 лаптăк (3176,3 гектар) палăртнă!

Нумаях пулмасть акă управлени ĕçченĕсем Муркаш районĕнчи Катькас ял тăрăхĕнче тĕрĕсленĕ 6 лаптăкран 2-шĕпе 2008 çултанпах усă курманни çиеле тухнă. Кунта тĕмсем те çын çӳллĕшех ашкăрнă.

Шупашкар районĕнчи Атайкасси ял тăрăхĕн территорийĕнчи çĕрсем те чаплах мар. Патшалăх çĕр надзорĕн пайĕн пуçлăхĕн çумĕ Нина Воронова каласа панă тăрăх 28 лаптăка тĕрĕсленĕ те 11 протокол çырма тивнĕ. Сăлтавĕ: пахча çимĕç вырăнĕнче – сип-симĕс, анчах та усăсăр курăк-тĕм.

Хула çывăхĕнчи лаптăксенчен тыр-пултан ытла шăкăр-шăкăр тенкĕ илесшĕн тени кунта шăпах çирĕпленет. 6 лаптăка сутса яма та ĕлкĕрнĕ. Тĕрĕслевчен темиçе кун маларах 1 лаптăка парнеленĕ.

Элĕк районĕнчи Юнтапа ял тăрăхĕнче вара 52 тăваткал метр çĕре ăпăртапăрпа хупласах хунă. Кирлĕ мар япаласене ятарлă вырăна кайса тăкас ĕçе йĕркелемешшĕн ял тăрăхĕн пуçлăхĕ тĕлĕшпе административшлă ĕç пуçарнă.

Çав районти Мăн Выла ял тăрăхĕн пуçлăхĕ тĕлĕшпе те территорири хытă каяшсен купине пуçтарманшăн протокол хатĕрленĕ, кунпа пĕрлех çитменлĕхе пĕтерме ыйтса предписани хăварнă.

Пăрачкав районĕнче те кунашкал йĕркесĕрлĕх хуçаланнă. Октябрьски ял тăрăхĕнче санкцилемен сӳп-çап купине пула 0,03 гектар шар курнă.

### ÇĔРПЕ МĔНЛЕ УСĂ КУРНИНЕ ВЫРĂНТА ТИВĔÇЛИПЕ ТĔРĔСЛЕМЕЛЛЕ

Федерации ведомствине прокуратурăн ĕçченĕсем кăна мар, муниципалитет çĕр контролĕ хастар ĕçлесен чăннипе кун йышши çитменлĕхсене хăвартрах пĕтерме те пулать пулĕ. Пирĕн ялсем çывăх ларнă май унта е кунта çум курăк ашкăрнине, сӳпçап сапаланса выртнине лайăххах пĕлеççĕ вырăнта. Официаллă мар, ентешле калаçса илниех витермелле пек.

Тĕрĕслевсем вара муниципалитетсенче çĕр контролĕ япăххах ĕçленине палăртнă. Инспекторсем пулнă 47 ял тăрăхĕнчен прокуратура çирĕплетнĕ тĕрĕслевсен планĕ 18-шĕн (Йĕпреç, Муркаш, Етĕрне, Çĕмĕрле, Шăмăршă, Комсомольски, Шупашкар, Улатăр, Елчĕк районĕсенче) çеç пулнă.

Раççей Федерацийĕн Çĕр кодексĕн 72-мĕш статйипе тата "Раççей Федерацийĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелессин пĕтĕмĕшле принципĕсем çинчен" саккунĕн 17.1 статйипе килĕшӳллĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен çĕр контрольне ирттермелле пулин те, хăшĕсем федерацин асăннă ведомстви çине шанаççĕ. Элĕк, Куславкка, Шупашкар, Çĕмĕрле, Çĕрпӳ тата Улатăр районĕсен администрацийĕсем ячĕпе çĕр саккунĕсене пăснă тĕслĕхсем тĕлĕшпе тĕрĕслевсем ирттерме ыйтса çырнă. Сăмахран, Шупашкар, Элĕк, Куславкка тата Çĕмĕрле районĕсенче 1,5 пин гектар çĕр сум курăк айне "путнă". Çĕрпӳ районĕнче 1 гектарăн пулăхлă çĕр сийне хырса илнĕ. Куславкка районĕнче пăснă 1,5 гектара япăх рекультиваци тунă.

Çырусем, паллах, ахальтен çуралман. Чăнах та, 3 юрлицона, должноçри 2 çынна тата 3 лаптăк хуçине явап тыттарма сăлтав пулнă.

Администрацисенчен кăтартнă лаптăксенче сум курăкĕнчен иртме çук, тĕммисем çын çӳллĕш пулин те, вĕсен хуçисене пурне те явап тыттарма май килмен. Нина Васильевна пĕлтернĕ тăрăх Куславкка районĕнчи 46 лаптăкран 30-шĕн хуçи пирки Пĕрлехи патшалăх реестрĕнче нимĕнле хыпар та çук. Кама явап тыттармалла? Çум курăкĕ вара çулсерен çăралсах пырать.

Сăмах май, управление çитнĕ пĕр çыру та хуравсăр юлмасть. Администраци е ытти çĕртен кăна мар, ахаль çынсенчен килнисем те тĕпчевсем ирттерме хистеççĕ. Çур çулта пĕтĕмпе 9 административлă тĕрĕслев йĕркеленĕ: Шупашкар, Çĕмĕрле, Красноармейски, Етĕрне, Çĕрпӳ, Вăрнар районĕсенче. Вĕсен кăтартăвĕсем тăрăх 91 пин тенкĕлĕх штраф тӳлеттернĕ.

Çĕр ĕçĕнче правур пулнă мăн асаттесем пире паян мĕн каланă пулĕччĕç? Мăнукĕсене наянланнăшăн лайăх сăмах тивес çук. Çĕр-аннемĕре хисеплесси ăс-тăнра пулмалла, лаптăксене пусă çаврăнăшне инспекторсем хистенипе кăна кĕртмелле мар.

**Н. ВАСИЛЬЕВА,**
**Раççей ял хуçалăх надзорĕн республикăри управленийĕн ĕçченĕ.**

# Ĕççĕрлĕхе пĕрле чакармалла

Коллеги ларăвĕнчен



Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев «Чечексен тĕнчи» суту-илӳ павильон директорĕпе Е. Яковлевпа предпринимательство ĕçне-хĕлне сӳтсе явнă самант.

Ĕç – пурнăç тыткăчи, тетпĕр пулсан та, рынок хутшăнăвĕсенче пурăнма пуçласан кун йĕркинче ĕççĕрлĕх пуррине те пирĕн йышăнмах тиврĕ. Унăн виçине пĕчĕклетесси вара – обществăн тата паянхи власть тытăмĕсен пĕрремĕш тивĕçĕ. Çавăнпа та Чăваш Республикин халăха ĕçпе тивĕçтерекен Патшалăх службин черетлĕ коллеги ларăвĕ Муркашра иртет тесен республика халăха ĕçпе тивĕçтерес пирĕн ĕç-хĕл çине уйрăм тимлĕх уйăрнине ăнлантăмăр.

Коллеги ларăвĕ район администрацийĕн ларусем ирттермелли залĕнче авăн уйăхĕн 19-мĕшĕнче ĕçлерĕ. Ăна Чăваш Республикин халăха ĕçпе тивĕçтерекен Патшалăх службин ертӳçи Сергей Димитриев ертсе пычĕ, вăлах пĕтĕмлетӳ турĕ.

Коллеги ларăвне официаллă уçиччен Сергей Петрович район администрацийĕн пуçлăхĕпе Р. Тимофеевпа тата «Чăваш Республикин халăха ĕçпе тивĕçтерекен Патшалăх службин Муркаш районĕнчи центрĕ» хысна учрежденийĕн директорĕпе И. Димитриевăпа уйрăм предпринимательсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрĕ. Çак тĕл пулусенче вырăнсенче патшалăх пулăшăвĕпе епле усă курни куç умне туллин тухрĕ.

Пуçлăхсем малтанах район центрĕнче иртнĕ çул вĕçĕнче уçăлнă «Чечексен тĕнчи» суту-илӳ павильонне çитсе курчĕç. Павильон хуçи уйрăм предприниматель Евгений Яковлев район администрацийĕпе Муркаш ял тăрăхĕн администрацийĕ вăхăтра хăйĕн бизнес-планне ырласа йышăнса аталану çулне уçса панине палăртрĕ. Хăйсен ĕçне пуçарма тĕллев лартнă мăшăра – Ольгăпа Евгений Яковлевсене – ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă патшалăх пулăшăвне 58,8 пин тенкĕ укçа илни тĕкĕ панă. Çамрăк мăшăр хăйсен ĕçне пуçарнипе пĕрлех республикăра инвалидсене тата нумай ачаллă амăшĕсене ĕçпе тивĕçтерессипе ĕçлекен тĕллевлĕ программăпа килĕшӳллĕн Çатракассинче пурăнакан нумай ачаллă Алина Семеновăна чечексем сутма ĕçе вырнаçтарнă.

– Патшалăх тимлĕх уйăрнине хамăр çинче систетпĕр. Тавах уншăн. Чечексемпе ĕçлесси вара – манăн чун туртнă ĕç. Вĕсемпе калаçма пĕлмелле. Çак илемпе çыхăну тытсан чун уçăлать, йывăрлăх иртет, ырă ĕмĕт вăй илет. Çынсем пирĕн патăмăртан чечексем туянса тухса кайнă чух тав сăмахĕ калани эпир тĕрĕс çул çинчине çирĕплетет, – сăмахларĕ Алина Викентьевна черетлĕ тавар туянакана чечек çыххи суйлама пулăшнă май.

Павильон тăхăр уйăх çеç ĕçлет пулин те, халăх хушшинче ырă ята тивĕçнĕ.

– Муркаш салине чечексемпе илемлетес ĕçе кăçал Яковлевсем пысăк тӳпе хыврĕç. Халăхăмăр илем патне туртăннине ырламалла кăна. Çак тăрăшулăх пирĕн малашне те çухалмасса ĕненес килет, – предпринимателĕн пултарулăхне палăртса каларĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев.

Кунта «Чăваш Республикин халăха ĕçпе тивĕçтерекен Патшалăх службин Муркаш районĕнчи центрĕ» хысна учрежденийĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарса хăварни вырăнлă пулмалла. Чăваш Республикинче халăха ĕçпе тивĕçтерессипе 2011 – 2013 çулсем валли пăхса хăварнă ведомствăлла тĕллевлĕ программăпа килĕшӳллĕн Муркаш енре вăхăтлăх тата тăтăш ĕç вырăнĕпе кăçалхи 8 уйăх хушшинче çеç 803 çынна тивĕçтернĕ. Ĕçлемен инвалидсене тата нумай ачаллă амăшсене ĕçпе тивĕçтерме пăхакан республикăри тĕллевлĕ программăна кĕрсе районти ĕçпе тивĕçтерекен центр кăçал çеç пĕр инвалида тата нумай ачаллă икĕ амăшне ĕç тупса панă.



Патшалăх пулăшăвĕпе усă курса хăйĕн ĕçне пуçарнă Н. Захарова.

– Ĕçлекен çынна патшалăх та пулăшать. Тăрăшакана пулăшма та кăмăллă. Акă Ольгăпа Евгений Яковлевсем килти хушма хуçалăхра чечек калчисем туса сутассине йĕркелени – çемьешĕн çеç мар, районшăн та тĕкĕ. Çемье икĕ теплицăра сухан, хăяр ӳстерсе сутă туни ял çыннишĕн хушма ĕç вырăнĕ, тупăш çăл куçĕ, – терĕ С. Димитриев «Никита» автовокзалĕн иккĕмĕш хутĕнче вырнаçнă «Ваш стиль» парикмахерскине çул тытнă май.



А. Семенова ĕç вăхăтĕнче.

Парикмахерски пирки калаçнă чух та унăн хуçи патшалăх пулăшăвĕпе тĕллевлĕ усă курни пĕрремĕш вырăнта. Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Отарккă ялĕнче пурăнакан Надежда Захарова ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă парикмахер пĕлĕвне илнĕ. Патшалăх пулăшăвĕпе усă курса (58,8 пин тенкĕ) 2011 çулта Надежда Ивановна тăван ялтах парикмахерски уçать. Ĕçлекен аталансах пырать. Кăшт вăхăт иртсен вăл хăйĕн бизнесне Муркаша куçарать.

– Ĕçпе тивĕçтерекен центр бизнес çулне уçма пулăшнишĕн савăнатăп паян. Кĕçех çак центр урлă парикмахера вĕреннĕ тепĕр хĕрарăм мана пулăшма килмелле. Çапла вара аталану çулĕ уçăлсах пырать тесе шутлатăп, – терĕ хăнасене ĕç вăхăтĕнче кĕтсе илнĕ Н. Захарова.

Патшалăх пулăшăвĕ вăл е ку сăлтава пула ĕççĕр юлнă çынсене ĕçпе тивĕçтерес тĕлĕшпе пысăккине çак хисеп те кăтартать. 2013 çул валли ĕççĕрлĕхпе пособисем тӳлеме тата ĕççĕр граждансене професси илнĕ вăхăтра стипенди тӳлеме федераци бюджетĕнчен 2122453,0 тенкĕ уйăрнă пулсан, районта 1085065,98 тенкипе усă курнă.

Ĕçпе тивĕçтерекен районти центра çак енпе активлăх кăтартма республика бюджетĕнчен 1496810,55 тенкĕ тата инвалидсемпе нумай ачаллă ашшĕ-амăшĕсене, инвалид ачасене пăхакансене ĕçпе тивĕçтерме республикăн 2013 – 2015 çулсем валли пăхнă тĕллевлĕ программипе килĕшӳллĕн 134000,0 тенкĕ уйăрнă.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

# Сăра эрехпе çывăх тăрать

Тухтăрпа калаçатпăр

***Паян республикăри наркологи стационарĕсене «Алкоголе парăннисем» диагнозпа хĕрĕх çула çитнисем тата çак вăхăтран аслăраххисем ытларах пыраççĕ. Йывăр пулсан та çак пулăма хăнăхрăмăр темелле. Юлашки çулсенче вара сăра ĕçесси ирĕкрен тухнăран алкоголизмпа чирлисен ӳсĕмĕ 20 – 23 çула çитрĕ. Çак ӳсĕмри çамрăксем чирĕн пĕрремĕш сыпăкĕпе анчах мар, иккĕмĕш сыпăкĕпе аптăрани те сывлăх хуралçисемшĕн çĕнĕлĕх пулма пăрахрĕ. Наркологин наци наука тĕпчевĕн центрĕн кăтартăвĕсемпе çамрăксен 75 проценчĕ çул çитмен вăхăтрах сăрапа туслашать. Çакăнти çивĕч ыйтусем тавра пирĕн корреспондент республикăри наркологи диспансерĕн психиатр-наркологĕпе Светлана ИЛЬИНАПА тĕл пулса калаçнă. Унпа эпир паян хамăр вулакансене паллаштаратпăр.***

**– Светлана Иосифовна, сăран сиенлĕ механизмĕсемпе пирĕн вулакансене паллаштарăр-ха.**

– Нумай çынна хумхантаракан ыйтăва хускатнăшăн малтанах сире тав сăмахĕ калатăп. Ку пулăм пирĕн халăхăн инкекĕ пулса тăчĕ. Сăра алкоголизмĕпе чирлисене терапи стационарĕсене сывалма хураççĕ. Çак шĕвеке пула шăк çулĕсем çинче шыçăсем аталанасси, гипертони, ишеми, миокардиострофи чирĕсем вăй илесси пысăкланать. Сăрана хушакан консервантсемпе продуктăн управлăхне ӳстерекен химилле япаласем пирĕн организма епле витĕм кӳнине вĕçне çити пĕлейместпĕр-ха. Анчах вĕсен сиенĕ пирки те пирĕн пĕр иккĕленӳ те çук.

**– Ĕçнĕçемĕн сăра та ытти алкоголь напиткĕсем пекех çыннăн организмне тыткăна илет. Сăрана парăннин клиника ӳкерчĕкĕ еплерех?**

– Сăрана парăнасси сисĕнмесĕр тата вăрăм вăхăтра пулса иртет. Пуçламăш стади – чи çăмăл форма. Çак вăхăтра сăра ĕçнине çывăх çынсем те сисмесĕр юлма пултараççĕ. Сăрана пĕр системăсăр малтан уявсенче, каярахпа юлташсемпе ĕç кунĕ вĕçленсен ĕçни – пысăк инкек патне илсе пыракан çул. Çак çула суйласа илекен кĕске вăхăтрах кашни каç иккшер кĕленче сăра ĕçессине «нормăна» кĕртет.

Сăра алкоголизмĕ йĕркеленесси – кашниншĕнех питĕ шуçлак та сисĕмсĕр процесс. Çынна анализсем партарса тестсем витĕр кăларса алкоголизм чирне палăртасси – питех те йывăр пулăм.

**– Кунта пирĕн вулавçăсене сăра алкоголизмĕн симптомĕсемпе паллаштармăрши?**

– Ку ыйтупа кăсăкланакана çак кăтартусене асра тытмалла: талăксерен 1 кĕленче ытла сăра ĕçме пуçлани, сăра ĕçмен чух чăкăрташланни тата çак пулăма сăра ĕçсе ирттерни, хушăран пуç ыратни, хырăм ӳсме (сăра хырăмĕ теççĕ) пуçлани, потенци пĕчĕкленни, кăнтăрла ыйхă пусни тата çĕрле çывăрайманни, ирсерен кăмăл уçма е мухмăр ирттерме тесе сăра ĕçни.

**– Çамрăксен организмĕ çине сăра епле витĕм кӳни çинче чарăнса тăрăр-ха тата.**

– Çамрăксем сăра ĕçни – питех те сенлĕ пулăм. Ача организмĕ сăрана хăвăртрах хăнăхать. Сăра ĕçекен çамрăкăн ӳснĕçемĕн ăс-тăн витĕмĕ сахалланать, хăлха вăйсăр илтме пуçлать, яш-кĕрĕмĕн хăюллăхĕ ӳснипе вĕсем сăра ĕçнипех çапăçма кĕрсе кайма пултараççĕ. Ку вара час-часах саккун умĕнче явап тытасси патне илсе çитерни пирки шутлама ан манăр.

**А. ПЕТРОВ калаçнă.**

«Раççей Перекет банкĕ» АУО – сире валли

# Банк çамрăк учительсене пулăшать

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи вĕренӳ институтĕнче анлă мероприяти иртрĕ. Унта «Чăваш Республикинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденисенчи çамрăк учительсене патшалăх пулăшăвĕ парасси» патшалăх программин презентацийĕ пулчĕ. Çакăнта çамрăк учительсем, Раççей Перекет банкĕн представителĕсем тата ыттисем хутшăнчĕç.

Статистика кăтартăвĕ тăрăх 2011 çулхи сентябрь уйăхĕ тĕлне Чăваш Ен шкулĕсенче 1468 çамрăк вĕрентекен (35 çулчченхи) е пĕтĕм учительсен 15,4 проценчĕ чухлĕ вăй хунă. Вăл шутран 786-шĕ хулари шкулсенче вăй хунă, 682-шĕ – ялсенче. Юлашки виçĕ çулта çамрăк ĕçченсен хисепĕ 100 çын чухлĕ кăна ӳснĕ. Çак сăлтава учительсем çурт-йĕр проблемипе çыхăнтараççĕ.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2012 çулхи 69 № Указĕпе килĕшӳллĕн пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденисенчи учитель ĕçĕнче пуçламăш утăмсем тăвакан специалистсем валли субсиди уйăрма пăхнă. Çак пулăшу çурт-йĕр туянассинче е çĕклессинче вырăнлă пулĕ. Унпа килĕшӳллĕн çавăн пекех ипотека кредичĕн процентне саплаштарассинчи тăкак пайне каялла тавăрса параççĕ. Пысăк пĕлтерĕшлĕ программăра Раççей Перекет банкĕ тĕп партнер пулса тăрать. Çурт-йĕр ыйтăвне татса парас тĕлĕшпе тунă пĕтĕм кредит килĕшĕвĕн 87 проценчĕ – çак банк урлă.

Çамрăк учительсемпе тĕл пулнă май банк специалисчĕсем программăпа тĕплĕнрех паллаштарчĕç. Çапла вара «Çурт-йĕр кредичĕ 9,5 процентран пуçласа» акци пынă май ĕç укçине çак банк урлă илекен учительсем валли кунта çăмăллăхсем ытларах та пăхса хунă.

Çавăн пекех презентацие пухăннисемшĕн «Çамрăк çемье» тата «12-12-12» программăсем те кăсăклă пулчĕç.

Итоги публичных слушаний

Итоги проведения публичного слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка» на территории Моргаушского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

18 сентября 2013 года прошли публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка».

На указанном выше публичном слушании было принято следующее решение:

1. Одобрить проект муниципального правового акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка».

2. Изменить вид разрешенного использования земельного участка с кадастровым номером 21:17:160302:632 из категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, улица 50 лет Октября, 42а с вида разрешенного использования «для размещения складского помещения временного торгового павильона» общей площадью 21 кв.м. на вид разрешенного использования «для строительства и эксплуатации магазина».

Сăмах – район администрацийĕн ĕçченĕсене

# Тăлăх ачасене – çурт-йĕр

***Юлашки тапхăрта ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнă ачасем пирки ытларах та ытларах, вăл шутра пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтересси пирки те асăнма пуçларĕç. Çакăн пирки тĕплĕнрех каласа пама район администрацийĕн попечительствăпа опека секторĕн ертӳçи Ирина КАБУРКИНА кăмăл турĕ:***

– Тăлăх тата ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнă ачасене тимлĕх уйăрасси – патшалăхăн тĕп задачисенчен пĕри. Çавна май юлашки тапхăрта Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин Правительствисем асăннă категорие çăмăллăх кӳрес тĕлĕшпе çĕнĕ саккунсем йышăнаççĕ, вăйра тăракан право акчĕсене улшăнусем кĕртеççĕ. Вĕсем тăлăх тата ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнă ачасен харпăрлăхĕнчи пурăнмалли çурт-йĕре юсассипе, асăннă категорие çурт-йĕрĕн ятарлă фондĕнчи пурăнмалли лаптăкпа тивĕçтерессипе çыхăннă.

Чăваш Республикинче 2004 çулта «Чăваш Республикинче социаллă хӳтлĕх парасси çинчен» Саккун йышăннă. Çакăнти 6-мĕш статьяна тăлăх ачасене халалланă. Асăннă категори харпăрлăхĕнчи çурт-йĕре республика шучĕпе 14 – 23 çулсенчи тăлăх ача ыйтнипе пĕр хутчен юсаса параççĕ. Çапла вара çакă санитари нормипе тата техника правилисемпе килĕшсе тăмалла. Кăçал виçĕ çуртра юсав ĕçĕсем пыраççĕ.

1996 çултанпа «Тăлăх тата ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнă ачасене социаллă хӳтлĕх парассинчи хушма гарантисем çинчен» Саккун вăйра тăрать. Çакăнти 8 статьяпа килĕшӳллĕн тăлăх ачасене, енчен те çирĕплетнĕ пурăнмалли лаптăк çук пулсан, вĕсем пурăннă вырăнта черетсĕрех социаллă нормăра палăртнă калăпăшран пĕчĕк мар çак лаптăкпа тивĕçтермелле. Çавна май çирĕплетнĕ лаптăк çуккисене çурт-йĕрпе тивĕçтернĕ ĕнтĕ. Вĕсен йышĕ пысăк мар, çулсерен пĕршер пулнă, кăçал вара 4 çынна çурт-йĕрлĕ тумалла.

Асăннă саккуна çулталăк пуçламăшĕнче хушăмсемпе улшăнусем кĕртрĕç, çавна май асăннă категорин çурт-йĕрлĕ пулмалли самантсем йышланчĕç. Чăваш Республики шайĕнче ятарлă çак йĕркесене çирĕплетрĕç.

Çапла вара енчен те тăлăх ачасем социаллă найм килĕшĕвĕпе çурт-йĕр вĕсем çинче шутланмасть е çакăн йышши çемье членĕсем пулмаççĕ, е çурт-йĕр харпăрçи мар пулсан; енчен те тăлăх ачасем çинче социаллă найм килĕшĕвĕпе çурт-йĕр вĕсенче шутланать е çакăн йышши çемье членĕсем пулаççĕ, е вĕсем çурт-йĕр харпăрçи, анчах та пурăнмалли çурт-йĕр юрăхсăр тесе йышăннă пулсан асăннă категори çӳлерех асăннă йĕркепе хăтлă çурт-йĕрлĕ пулма тивĕç.

Çаксене шута илсе тăлăх тата ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнă ачасене ятарлă фондри çуртйĕрпе тивĕçтерес ĕç пырать, çавна май çак йĕркесемпе килĕшсе тăракансен ку тĕлĕшпе кирлĕ документсем хатĕрлемелле, район администрацийĕн попечительствăпа опека секторне пымалла. Хатĕр документсене ведомствăсем хушшинчи комисси пăхса тухать. Черете 14 çула çитнисене тăратаççĕ, пурăнмалли лаптăка 18 çула çитнисене параççĕ.

Тĕплĕнрех асăннă сектора ыйтса пĕлме пулать.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

Наглядная информация о применении документа

Вам сразу ясно
• действует документ или нет
• каковы особенности применения
К каждой статье подобраны консультации, разъяснения, судебная практика

КонсультантПлюс
надежная правовая поддержка
www.consultant.ru/super

Регионально-информационный центр сети КонсультантПлюс
ООО «Фирма «Элис»
г. Чебоксары, ул. Нижегородская,4. Телефон: (8352) 62-35-15.

Çурт-йĕр

# Патшалăх пулăшăвĕ вырăнлă



***Кирек камшăн та пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвĕ – чи пĕлтерĕшли тата кăткăсси. Ăна тĕпрен çĕклес е туянас пулсан уйрăмах çамрăк çемьесене йывăр. Харпăр хăй вăйне кăна шанас пулсан ку ĕç самай вăраха пырĕччĕ. Çавна май çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатас, çурт-йĕр ыйтăвне татса пама пулăшас тĕлĕшпе Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин Правительствисем чылай программа йышăнса вăя кĕртеççĕ.***

***Сăн ӳкерчĕкри Феофановсен çемйи «Çамрăксене çурт-йĕрпе тивĕçтересси» программа шайĕнчи пулăшу свидетельствине илчĕ. Светлана Борисовна пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхра юриста тăрăшать. Унăн мăшăрĕ Виталий Владиславович – акционерсен «Шупашкарти «Сеспель» предприяти» хупă обществинче слесарь. Феофановсемшĕн патшалăх пулăшăвĕ вырăнлă пулĕ.***

**Р. АЛЕКСАНДРОВА.**

# Турă Амăшĕ çуралнă кун праçникĕ

Православи уявĕ

Сентябрĕн 21-мĕш кунĕнче чиркӳре таса Хĕр Мария çуралнине асăнса праçник тăваççĕ. Галилея çĕрĕнче Назарет хулинче арлă-арăмлă икĕ ватă çын пурăннă. Вĕсем Давид патша йăхĕнчен пулнă. Упăшки Иоаким, арăмĕ Анна ятлă пулнă. Вĕсем Турра хытă, тĕрĕс ĕненсе пурăннă, анчах вĕсен ача-пăча пулман. Ача çукран вĕсем питĕ хурланнă, Турă пире ача паринччĕ тесе питĕ хытă йăлăннă. Турă пире ача курмалла тусан, эпир ăна Турра Хăйнех парăттăмăр тесе сăмах панă. Вĕсем таса пурăннине кура, хуйхине пĕр ӳпкелемесĕр тӳснине кура Турă çав ватăсене ырăлăх кăтартнă. Вĕсенĕн хĕр ача çуралнă, Ăна Мария ятлă хунă.

Таса Хĕр Мария виçĕ çул тултарсан унăн ашшĕпе амăшĕ хăйсем Турă умĕнче панă сăмаха тытса ăна чиркĕве леçсе панă. Унта Мария 14 çулчен пурăннă. Вăл вăхăтра унăн ашшĕпе амăшĕ вилнĕ. Иоакимпа Анна хăйсен хĕрĕ Туррăн суйласа илнĕ савăнăçĕ пулассине, унтан тĕнчене Çăлакан çуралассине пĕлмен. Таса Хĕр Мария пирĕн Христос Туррăмăрăн Амăшĕ пулма тивĕçлĕ пулнă. Вăл Херувимсенчен те аслă, Серафимсенчен те мухтавлă, Ăна пĕтĕм тĕнче мухтать.

Пире те Турă кашнине ача-пăча панă. Кашнин пирĕн ывăл-хĕр пур. Анчах эпир вĕсене Турра юрăхлă ӳстеретпĕр-ши? Ачасене пĕчĕккĕллех чиркĕве илсе çӳремелле. Чиркĕве çӳрекен çын Турăран уйрăлмасть. Пĕчĕккĕлле чиркĕве çӳреме вĕреннĕ ача пысăклансан та вăл йăлана пăрахмасть. Вăл Турă патне каймаллине астуса тăрать. Çавăн пек çын ырă пулать, Турă умĕнче хисеплĕ çын шутланать.

**Йӳçкасси чиркĕвĕн настоятелĕ Сергий атте.**

# Вăхăтра тӳленине нимĕн те çитмест

Налуксем

Çак вăхăта илес пулсан налук инспекцийĕ пурлăхшăн налук тӳлемелли пирки уведомленисене пурне те ярса панă. Налука законодательствăпа пăхнă вăхăтра тӳлесе татассипе парăма кĕрес мар тетĕр пулсан, çак ĕçе хăй вăхăтĕнче туса ирттерме тăрăшăр.

Аса илтеретпĕр: уйрăм çынсен пурлăхшăн налука 2013 çулхи **ноябрĕн 1-мĕшĕччен**, транспорт налукне кăçалхи **ноябрĕн 5-мĕшĕччен** тӳлесе татас пулать. Енчен те сирĕн налук тӳлессипе е унăн калăпăшĕ тĕлĕшпе ыйтусем пур пулсан, çавăн пекех тĕрлĕ сăлтава пула налук тӳлемелли пирки сирĕн пата уведомлени пымарĕ пулсан, налук инспекцине кĕрсе тухма ан манăр. Адресĕ: Муркаш ялĕ, Гагарин урамĕ, 4-мĕш çурт, тел.: 62-4-52.

Хăвăрăн бюджет умĕнче парăм пуррипе çуккине тĕрĕслесе тăрассипе «Личный кабинет налогоплательщика для физических лиц» электрон сервисĕпе усă курни меллĕ. Çапла майпа эсир çак услугăсене илме пултаратăр:

– бюджет умĕнче парăмсем пуррипе çукки, налуксем мĕн чухлĕ шутласа пани тата тӳлени, кусакан тата кусман пурлăх объекчĕсем пирки актуаллă информаци илейретĕр;

– налук тӳлемелли пирки уведомленисене тата налук тӳлевĕсен квитанцийĕсене пичетлесе кăларайратăр, налук парăмне тӳлесе татайратăр, хăвăр налук инспекцине каймасăрах налук органĕпе çыхăнма пултарайратăр.

«Личный кабинет налогоплательщика для физических лиц» сервиспа усă курма тытăнас тесен налук тӳлекенĕн хăйне хăш налук инспекцийĕнче учета илнине пăхмасăрах кирек хăш налук инспекцине пырса логин тата пароль илмелле. Сервиспа çыхăнтарма заявление www.nalog.ru сайт урлă та пама пулать.

Налука банк уйрăмĕсенче кăна мар, килтен тухмасăрах тата партнер банксен электрон сервисĕпе усă курса та тӳлеме пулать. Налука онлайн-тӳлев мелĕпе www.nalog.ru «Заплати налоги» сайтра интернет-сервиспа усă курса та тӳлеме май пур.

**Н. ВАСИНА,**
**ЧР 8 № налук инспекцийĕн пуçлăхĕн çумĕ, РФ патшалăх граждан службин 3-мĕш класлă советникĕ.**

# Кил тата хушма хуçалăх



# Пахча çимĕç – тупăш çăл куçĕ

Аталану çулĕпе



Йӳçкасси ял тăрăхне çитсе килме тӳр килчĕ. Меллĕ самантпа усă курса Актайри Васильевсен хушма хуçалăхĕпе паллашрăм. Унта çитсе килни ахальтен мар, тăрăшуллă çемье ĕç-хĕлĕ пысăк шайра. Палăртса хăвармалла, асăннă хуçалăх пурнăç уттипе тан пырать, кашни лаптăк çĕрпе тĕллевлĕ усă курать.

– Пиçнĕ помидорсене пуçтаратăп, çулçисене иртетĕп, – терĕ картишне кĕнĕ Александр Дмитриевич пире кĕтсе илнĕ май.

Паллах, мана ку калаçу питĕ тĕлĕнтерчĕ. Умра кĕç-вĕç «шурă шăна» курăнас тапхăр вĕт, вăл вара халĕ те çулçă иртет. Эпир помидор тунисене хăçан пуçтарнине те манса кайнă ĕнтĕ.

Унăн сăмахĕн чăнлăхне курас-пĕлес тенипе пахчана тухрăмăр. Кунта хăтлăх хуçаланать, кашни кĕтесре çĕр ĕçченĕн тăрăшулăхĕ палăрать. Пахчара улма-çырла йывăççисем йышлă, исĕм çырлипе çĕнĕ сортлă пан улми пысăк тухăçпа усăннă. Чăнах та асăннă хуçалăхра пахча çимĕç ӳстерес, пуçтарас хĕрӳ тапхăр пырать иккен. Кунти ултă теплица, парник хуçалăх ертӳçине пахалăхлă продукци ытларах туса илме май параççĕ. Пĕрремĕш теплицăна кĕтĕм те тĕлĕнтĕм, унта икĕ çын çӳллĕш помидор явăнса ӳсет, ун çинче шултăра çимĕç йышлă – симĕсси те, хĕрли те. Эпир вара лутра пулакан, ытлашши вăй хумасăр пысăк тухăç паракан сорт суйласа илме тăрăшатпăр, тĕрĕсрех каласан, калча лартатпăр та ун пирки манатпăр, çимĕç пулсан кăна ун пирки аса илетпĕр.

– Эпир темиçе çулах Голланди сорчĕсемпе кăна ĕçлетпĕр, вĕсене Мускавран кӳрсе килетпĕр. Çапла вара вĕсенчен пахалăхлă продукци ытларах илме пулать. Ак çак сорт помидор ултă метр таран хăпарать, пĕр туна вăтăр килограмм чухлĕ çимĕç парать, паллах, кирлĕ ĕçсене вăхăтра тата пĕлсе пурнăçласан. Паха йышши сортсем хуçалăх тăкакне самай саплаштарма май параççĕ. Кунта сарлăнă сортсемпе усă курни – ырă вăхăта сая яни кăна, – терĕ вăл ĕçленĕ хушăрах манпа калаçнă май.

Тепĕр теплицăра вара пăрăç, баклажан ӳсеççĕ. Паллах, вĕсене те пирĕн пахчасенчипе танлаштараймăн, самай шултăра тата илемлĕ. Апла пулсан туянаканшăн илĕртӳллĕ, çавна май хакĕ те пысăк.

– Тĕллевлĕ ĕçлесен пахча çимĕçрен пысăк тупăш илме пулать. Хăяр тухăçĕ кăçал питĕ савăнтарчĕ, пĕр килограмне вăтăр тенкĕрен чакарман. Икĕ машина çĕр улми ăсатрăмăр, пĕр килограмне вунă тенкĕпе вырнаçтартăмăр, ăна икĕ гектар çинче лартса ӳстертĕмĕр, – паллаштарать хуçалăх ĕçĕ-хĕлĕпе Александр Дмитриевич.

Вăл хатĕр продукципе сутлăха кайма васканине аванах туятăп, пĕлетĕп, чăн-чăн çĕр ĕçченĕшĕн йĕпе-сапа та чăрмав мар. Ку чухне уй-хир сухалаймăн, çавăнпа та Александр Дмитриевич вăрăм çула тухма хыпаланать. Вăл каланă тăрăх пахча çимĕç вырнаçтарасси уншăн пысăк йывăрлăх мар, мĕншĕн тесен хушма хуçалăхри продукци пур енлĕ паха шутланать.

Урам вĕçĕнчи купăста ани çинче те кĕçех хĕрӳ тапхăр пуçланмалла, пĕр гектар – пĕчĕк лаптăк мар. Ку çимĕç валли питех те меллĕ вырăн суйланă, юнашарах пĕве çуталса выртать. Манăн ыйтăва ăнланнă евĕр вăл калаçăва пикенчĕ.

– Кунта пĕччен вăй çителĕксĕр, техника та пур ĕçе пурнăçлаймасть. Виçĕ ывăл, мăшăр май килнипе сад-пахчара, уй-хирте тăрăшаççĕ. Çавăн пекех манăн анне Лилия Ивановна та пире чылай пулăшать. Вăл «Ударник» хуçалăхра тĕп бухгалтерта чылай хушă ĕçленĕскер халĕ тивĕçлĕ канура ĕнтĕ.



Çĕр ĕçчене районта кăна мар, республикăра та аван пĕлеççĕ, унăн хăйĕн клиенчĕсем. Вăл лартса ӳстернĕ калча-хунава чылайăшĕ кăмăллать. Çапах та вăл хатĕр продукципе ытларах аякри тăраха сутă тума тухать.

Çӳлерех асăннисемсĕр пуçне хушма хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетеççĕ. Çакăн пек пултарулла çынсем пур хамăр хушăрах.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Усăллă çимĕç

## Пулă çăвĕ

Пулă çăвĕ çыншăн та, выльăх-чĕрлĕхшĕн те паха çимĕç шутланать. Тĕслĕхрен, сысна çурине, пăрăва çак витамина пама тăрăшмалла, ун пек чухне вĕсем лайăхрах ӳссе аталанаççĕ. Вăл пысăк молекулярлă çу кислотисенчен тăрать, А тата Д витаминсемпе пĕрле вĕсем çĕнĕ клеткăсене ӳссе аталанма пулăшаççĕ. Çавна май аманнă вырăнсем те хăвăртрах сипленеççĕ.

Асăннă продукт пур енлĕ усăллă. Пулă çăвĕ нумая тăсăлакан бронхитран тата гастритран, пыршă чирĕсенчен сывалма пулăшать. Çавăн пекех вăл организмăн иммуна системине çирĕплетет. Иммунитет вăйсăрланнă пур çынна та пулă çăвĕ кирлĕ. Вăл – ракран сыхланмалли тата радиаци чирĕнчен сипленмелли хăватлă çимĕç.

## Купăстапа ыхра

Халĕ купăста пуçĕсем пулса çитнĕ ĕнтĕ, кĕçех вĕсем çурăлма та пуçлаççĕ. Унран вара тĕрлĕ çимĕç хатĕрлеме пулать.

2 кг купăста çине 2 – 3 кишĕр тата пĕр пуç ыхра кирлĕ. Çаксене вĕттĕн турамалла, 5 литр кĕрекен савăта ямалла. Ытларах хатĕрлес тетĕр пулсан, паллах, пысăкрах савăт вырăнлă.

Маринад валли 1,25 литр шыв, çур стакан сахăр песукĕ, 2 апат кашăкĕ тăвар, 1 стакан тип çу, десерт кашăкĕпе 70 проц. уксус илмелле. Вĕрекен хатĕр шыва купăста çине ямалла та пусăрăнтармалла.

## Исĕм çырлипе купăста

Пĕр пуç купăста турамалла та пĕр апат кашăкĕ тăварпа хутăштармалла. Шултăра терка витĕр 3 кишĕр кăлармалла. Унта вĕттĕн туранă 2 пуç сухан тата 1 ыхра хушмалла. Пурне те пĕрле пăтратмалла та 100 г исĕм çырли ямалла.

Маринад валли 0,5 литр çине 1 стакан сахăр песукĕ, тип çу тата уксус кирлĕ. Вĕреме кĕртнĕ маринад шывне купăста çине ямалла.

## Сивĕ шывпа тунă купăста

2 литр сивĕ шыв çине 1 стакан сахăр песукĕ, 2,5 апат кашăкĕ тăвар, уксус ямалла. 3 кг таякан купăста пуçне шултăра турамсем тумалла та пысăк савăта тултармалла, сийĕн-сийĕн терка витĕр кăларнă кишĕр, ыхра, пăрăç сапмалла та шыв хушмалла. Çиеле тухмарĕ пулсан пăшăрханма кирлĕ мар, çĕр каçа унăн сĕткенĕ тулать.

## Помидора чĕрĕлле усрар-и?

Хĕрелсе çитнĕ çирĕп помидора çумалла, таса савăта тултармалла. Ыттисене – çемçеррисене, ытлашши пиçсе кайнисене – авăртса çав савăта ямалла. Тутанса пăхăр, тăварлăрах пулни япăх мар. Çак хутăшлă виçĕ литр кĕрекен савăта вунă таблетка аспирин ватса ямалла, хупламалла. Холодильника е сивĕ ытти вырăна лартмалла.

**Р. ИВАНОВА сĕнĕвĕсем.**

Усă курма сĕнетĕп

# Тĕрлĕ тĕслĕ помидор çиер-и?

Помидор çимĕçĕн юлашки тапхăрĕ пырать, хăшĕ тунисене ана çинчен пуçтарнă, тислĕк тăкса йăран касса хунă. Пысăк тухăç илесси вара сортран чылай килет. Ку таранччен хĕрлĕ тĕслĕ шултăра помидор («Бычье сердце» йышши) сортне ытларах кăмăлланă. Юлашки тапхăрта симĕс, шурă, хура тата ытти тĕслĕ пулакан помидора кăмăллаççĕ. Вĕсенче витамин шайĕ, вăл шутра антоциан, каратиноид, «телей витаминĕ» ыттисенчен пысăкрах.

Тĕксĕм тĕслисенче – антоциан, хĕрлĕ тата сарринче бета-каротин тата ликопин нумай. Ликопин холестерин шайлашăвне йĕркелеме пулăшать, атеросклероз аталанассине чакарать.

Кăвак тата хура тĕслисем экзотика çимĕçĕсем шутланаççĕ. Пĕрремĕш сорт шăтса тухсан 80 – 90 кунран пулса çитет. Тĕмĕ çӳллĕшĕ пĕр метр таран пулма пултарать. Ку тĕслĕ çимĕçе юрату пан улмийĕ теççĕ, тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх ку тĕлĕшре унăн витĕм пысăк.

Хура тĕслĕ çимĕç чĕре, пуç мими ĕçне йĕркелеме, юна холестеринран тасатма пулăшать. Селекционерсем çакăн йышши çимĕçпе алă çул каяллах ĕçлеме пуçланă. Черри сортлă помидор тухăçĕ ыттисенчен самай пысăк. Уйрăмах «Кубинский» (600 гр), «Исполин» (700 гр), «Гигант черный» (1100 гр), «Цыган» 9300 гр) сортсем савăнтараççĕ.

Çак сортсене шалча çумне çыхмалла, çимĕçĕсене çĕр çумне перĕнтермелле мар, унсăрăн тĕрлĕ чир-чĕр ерме пултарать. Ӳссе çитнĕ çимĕçе вăхăтра пухмалла. Ытлашши турата, çулçăна касма тăрăшмалла. Тĕрлĕ тĕслĕ сортлă помидор кирек епле апат-çимĕçре те илемлĕ курăнать, чи пĕлтерĕшли – вĕсен усси ытларах пулни. Анчах та çак сортсем пахчаçăран ытларах тимлĕх ыйтаççĕ. Вĕсем диета çимĕçĕсем пулнине шута илсе хими препарачĕсемпе сахалтарах усă курма тăрăшмалла, органика апатлантарăвĕ вара вырăнлă.

**И. БРИЖАНЬ.**
Краснодар крайĕ.

Ан ӳркенĕр

## Тăвата сехетрен хатĕр пулать

2 кг купăста, 4 шăл ыхра, 2 кишĕр, 1 кăшман илмелле. Çак çимĕçсене вĕттĕн тураса хутăштармалла.

Маринада çапла хатĕрлемелле. Пĕр стакан вĕрекен шыв çине 0,5 стакан сахăр, çавăн чухлех тип çу тата 6 процентлă уксус кислоти, пĕр апат кашăкĕ тăвар хушмалла. Купăста çине маринад янă хыççăн 4 сехетлĕх пӳлĕмре лартмалла.

## Техĕмлĕ

Тута-çăвара чĕпĕтекен çимĕç кăмăллакансемшĕн вара çĕр улмипе горчица техĕмлĕ пулĕ. Çĕр улми пĕçернĕ хыççăнхи çур литр шыва савăта ярăр. Унта пĕр апат кашăкĕ чухлĕ горчица хушăр, пĕчĕк çулăм çине хупăлчапа витсе пилĕк минутлăх лартăр. Çĕр улми çине хурса памалли соус пулчĕ те. Вĕрилле çиме питĕ тутлă, çак çимĕçе уйрăмах арçынсем кăмăллаççĕ.

Пахчара

## Хĕле хатĕрленетпĕр

Виноград кăçал пысăк тухăçпа савăнтарчĕ. Çитес çул та çапла пултăр тесен халех тăрăшмалла. Унăн туни тавра тислĕк хумалла, анчах та ытла çывăха ан хурăр, унсăрăн шăши йăва тума пултарать. Тăпрана кăпкалатмалла, çум курăкĕсене тăпăлтармалла. Ӳкнĕ çулçăсене, юлнă çимĕçсене пуçтарса илмелле. Тунине тăпра çине илсе хума ан васкăр, тăтăш çумăр çунипе çĕр нӳрĕ, çĕрме пултарать. Малтанхи сивĕсем пуçлансанах лартламалла мар.

**Н. ИВАНОВ.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления




**27 сентября 2013 года на центральном рынке с. Моргауши ОАО «Плодопитомник» г. Лысково реализует саженцы плодово-ягодных и декоративных культур, роз, хвойников. Цены от производителя.**

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:200701:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Цветков Сергей Юрьевич, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, с. Тораево, ул. Кирова, д. 36.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:200701:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Любимов Михаил Александрович, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кюрегаси, ул. Центральная, д. 31.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:072501:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 6-33.




**OKNA-VEKA – на ВЕКА!!!** Металлические двери из Йошкар-Олы, межкомнатные двери, жалюзи, ворота. Срок от 7 до 10 дней. Любые размеры, под ключ, гарантия. Адрес: г. Ядрин, ул. 50 лет Октября, д. 75, м-н «Окна и двери». Тел.: 8(83547)23-2-96, 8-961-344-53-47, 8-919-666-39-02. 3-10.

**Продаю колодезные кольца, бордюры, поребрики. Бурение колодцев, отверстий, установка опор ЛЭП и др. Тел.: 8-927-668-96-96, 8-917-659-60-60.** 12-13.







**ТЕПЛИЦЫ** от производителя из сотового поликарбоната 3х6, 3х8 и т. д. Телефоны: 8-917-651-00-76, 8-927-858-28-79.

**Возьму в аренду помещение под магазин (одежда, обувь и др.) от 80 кв. м. и выше. Тел.: 8-906-382-98-96, 8-965-596-88-20.** 1-4.

**Цифровое спутниковое телевидение ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19.** 5-10.

**Срочно! Вахта в Москву и МО:**
**– фасовщицы-упаковщицы**
**– грузчики-комплектовщики**
Жилье, питание – бесплатное.
Вахта: 15/15, 20/10, 30/15, 45/15.
З/п 27 000-35 000 руб. 1-5.
Тел: 8(8352)36-42-92, 36-42-94.

**Требуются рабочие для сборки корпусной мебели в с. Моргауши. Тел.: 62-6-60, 8-905-343-08-10.** 1-2.

**Спутниковое цифровое телевидение ТРИКОЛОР - 7300 руб. +подарок на 500 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.** 2-10.

**Немецкие качественные пластиковые окна. Замер, доставка, установка – бесплатно. СКИДКИ.** Тел.: 8-927-844-78-11. 7-10.

**ПРОДАЕТСЯ**
**двухкомнатная квартира (48 кв. м., 2 этаж) по ул. 50 лет Октября, д. 10. В хорошем состоянии, индивидуальное отопление, счетчики воды, теплые полы в совмещенном сан. узле, утепленный балкон. А также оставляем: кухонный гарнитур, холодильник, газовую плиту, набор мебели для детской, шкаф-купе, оборудованный с/узел, мягкую мебель, журнальный столик, светильник, шторы. Цена 2 млн. руб. Торг. Тел.: 8-905-344-76-36. Лилия.**









**Продаю: кирпич красный одинарный, полуторный; облицовочный всех цветов; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк; гравмассу; керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97.** 11-12.

* * *

**Продаем зернофураж: пшеница – 9 руб., ячмень – 8 руб., рожь – 6 руб., горчица – 40 руб. за 1 кг. Тел.: 8-987-760-57-71.** 5-5.

* * *

**Пĕчĕк пăру, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-343-60-63.** 8-10.

* * *

**Продаю коз. Тел.: 8-937-956-33-63.**

* * *

**Ноябрь уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тынашка сутатпăр. Тел.: 8-937-371-31-95.**

* * *

**Продаю песок, гравмассу, бой кирпича с доставкой. Тел.: 8-905-347-99-15.** 8-10.

* * *

**Закупаю бычков, овец, молочных телят. Тел.: 8-905-343-46-23.** 9-10.

* * *

**Продаю пшеницу. Тел.: 8-987-672-79-58.**

* * *

**Хорнуй ялĕнче выранта пурăнмалла пӳрт ытти хуралтăсемпе пĕрле сутатпăр. Тел.: 8-927-865-07-00.** 3-3.

* * *

**В сельскохозяйственное предприятие «Ударник» требуются: зоотехник, доярки, скотники, механизаторы. Семейным предоставляется трехкомнатная квартира, а одиноким – благоустроенное жилье. Тел.: 8-917-670-72-49, 8-905-343-16-64.** 6-10.

* * *

**Продаю мед цветочный, урожай 2013 года, 300 руб. за 1 кг. Магазин «Визит», Моргаушский рынок, место 40. Тел.: 8-908-309-66-75.** 4-10.

* * *

**Март уйăхĕнче пиллĕкмĕш пăруламалли хĕрлĕ-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-965-688-48-38.**

* * *

**Покупаем пух-перо, новые и старые перины-подушки, также производим обмен на постельные принадлежности. Тел.: 8-937-010-02-15, 8-961-320-20-91.** 2-2.

* * *

**Продаю ОПГС (гравмасса), песок. Тел.: 8-905-199-69-33.** 1-10.

* * *

**Куплю старинные монеты. Дорого. Тел.: 8-927-665-76-52.**

* * *

**Качакасене ăратлă (Зааненски) качака такипе пĕтĕлентерме йышăнатăп. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-927-851-55-49.**

* * *

**Продаются телки, отел в декабре и навоз на самовывоз. Тел.: 8-967-792-54-69, 8-952-025-18-07.**

* * *

**Вăкăрсем, тынасем, пăрусем туянатпăр. Тел.: 8-987-665-02-13.** 2-2.

**БЕТОН, РАСТВОР всех марок. Доставка. Дешево. Тел.: 8-927-668-87-78.** 33-43.

**ТЦ «ЛОТОС» реализует: цемент – 175 р., профнастил окраш. 213 руб. кв. м., оцинкован. 171 руб. кв. м., трубы б/у для столбов 127 р. пог. м. , профиль 20х20, 40х20, 40х40, поликарбонат тепличный – 1500 р., утеплители, сайдинг, двери стальн. и межкомн. Доставка. Заявка по тел.: 8-917-665-27-26, 48-33-46.** 8-10.

**ПЕСОК речной, ОПГС (гравмасса), ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел.: 8-927-668-84-40.** 33-43.

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36.** 4-10.

**Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58.** 5-25.

**ПРОДАЮ: ОПГС (ГРАВМАССУ), ПЕСОК, ЩЕБЕНЬ ВСЕХ ФРАКЦИЙ. Тел.: 8-937-384-06-50, 8-927-995-07-51.** 19-21.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 1-10.

**АКЦИЯ! ОСЕННИЕ СКИДКИ! Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.:8-905-340-07-78.** 1-10.




## Прогноз погоды

| | суббота 21 сентября | | | | воскресенье 22 сентября | | | | понедельник 23 сентября | | | | вторник 24 сентября | | | | среда 25 сентября | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | **+11** | **+11** | **+12** | **+11** | **+11** | **+12** | **+14** | **+11** | **+11** | **+13** | **+14** | **+11** | **+11** | **+11** | **+11** | **+7** | **+6** | **+8** | **+8** |
| Давление мм | 745 | 744 | 741 | 740 | 740 | 741 | 739 | 739 | 738 | 738 | 737 | 737 | 737 | 739 | 740 | 741 | 741 | 742 | 741 |
| Влажность % | 86 | **95** | 90 | **97** | **99** | **98** | 80 | **96** | **100** | **96** | 80 | **97** | **100** | **96** | 83 | **92** | **98** | 89 | 69 |
| Ветер м/сек | 5 | 6 | 6 | 3 | 3 | 4 | 2 | 2 | 3 | 3 | 3 | 1 | 1 | 3 | 4 | 2 | 2 | 2 | 3 |
| | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю | Ю | Ю | Ю-З | Ю | Ю | Ю-В | Ю-В | Ю | Ю-З | С | С | С-З | Ю-З | Ю-З | З |
| Солнце восход / заход | | 06:37 | 18:54 | | | 06:39 | 18:51 | | | 06:41 | 18:48 | | | 06:43 | 18:46 | | 06:45 | 18:43 | |
| Луна восход / заход | | - | - | | | 19:41 | 10:18 | | | 20:10 | 11:30 | | | 20:44 | 12:36 | | 21:25 | 13:34 | |

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 20.09.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4771.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.